Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Волков Геннадий Никандрович**

**Книга: Асанне калавӗсем**

# Рассказ: Асанне

Манӑн асанне, нумай пурӑннаскер, чылай юмах-халап пӗлетчӗ. Хӑйӗн мӑнукӗсене пуҫтарса вӗсене тӗрлӗрен тӗлӗнмелле юмахсем каласа пама юрататчӗ. Унӑн халапӗсен шутне пӗлместӗп те.

Асанне тӑхӑр ача ҫуратса ӳстернӗ. Мӑнукӗсем те сахал мар пулнӑ ҫав: асанне пурӑннӑ чухнех вӗсен шучӗ вӑтӑр тӑватта ҫитнӗччӗ. Вӑл пире пӑхса ҫитӗнтернӗ чух сӑмахпа та, ӗҫпе те вӗрентетчӗ, пурсӑмара та ӑс паратчӗ.

Ача-пӑчана асанне ҫав тери юрататчӗ, ҫавӑнпа ун тавра яланах хамӑр урамри ачасем кӗшӗл пуҫтарӑнатчӗҫ.

Пире час-часах авалхи йывӑр пурнӑҫ ҫинчен кала-кала паратчӗ. Мӗн-мӗн кӑна ҫукчӗ-ши асанне юмахӗсенче!

Акӑ халь те лайӑх аставатӑп-ха улпутпа ямшӑк ҫинчен янӑ халапа. Ямшакӗ пит чухӑн пулнӑ. Унӑн хӗллехи сивӗре тӑхӑнмалли ҫӗтӗк сӑхманпа чаппансӑр пуҫне урӑх нимӗн те пулман. Улпут пуян пураннӑ вара. Вӑл хаклӑ йышши кӗрӗкпе ҫӳренӗ, ӑша тӑлӑп тӑхӑннӑ.

– Анчах пурнӑҫ пуянлӑхра кӑна мар-ҫке, – тетчӗ те асанне пире, ҫав улпутӑн тӑмсайлӑхӗ пирки каласа култаратчӗ. Ямшӑкӑн ӑс-хакӑлне ырласа: «Ӗҫсӗр, хӗнсӗр ӑс пулмасть», – тесе хуратчӗ тата юлашкинчен.

Асанне кил-йышпа лайӑх пурӑнмалли ҫинчен, ваттисене хисеплесси, ӗҫе юратасси пирки нумай калатчӗ. Унӑн «Ӑслӑ ача», «Аҫу-аннӳ яланах хисепре пултӑр», «Ваттине хисепле, ху та хисеплӗ пулӑн», «Ват ҫын – тӑват ҫын» калавӗсенче аслисене яланах хисеплемелли ҫинчен каланӑ. Ҫавӑнтах тата ӗлӗк-авал пурнӑҫ питӗ йывӑр пулнине те курма пулать.

Кахалсене, этеме хисеплемен ҫынсене асанне пӗр хӗрхенмесӗр питлетчӗ. Хӑш-пӗр юмахне калама пуҫличчен вӑл:

– Кӑна Алякки йысна каласа панӑччӗ, хӑйне вара аслашшӗ каланӑ, – тетчӗ.

Алякки йыснӑшӗ XIX ӗмӗрӗн 60-мӗш ҫулӗсенчех вилнӗ, ун аслашшӗ вара XVIII ӗмӗрӗн пуҫламӑшӗсенче пураннӑ пулать. Ҫапла вара, асанне хӑш-пӗр юмахӗсене ҫеҫ хай шухӑшласа кӑларнӑ, ыттисем темиҫе ҫӗр ҫул каялла пулнӑ ӗҫсем ҫинчен калаҫҫӗ.

Асанне хӑйӗн иртнӗ кун-ҫулне пит хурласа асӑнӑтчӗ.

– Эсир калама ҫук телейлӗ, – тетчӗ вӑл. – Манӑн мӗн пулнӑ? Эпӗ мӗн курнӑ?

Пиллӗкре чух тӑлӑх ан пустӑр тесе хама анне тупакӗ урлӑ каҫарттарнине астӑватӑп, унтан выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурӑнса асапланнӑ, вун ултта ҫитсен – пӗр палламан ҫынна ют яла качча пачӗҫ.

Урӑх нимӗн те аса илмелли ҫук. Халь ҫеҫ ҫын пек пурӑнма пуҫларӑмӑр.

Авалхи пурнӑҫа асанне хальхи пурнӑҫпа нумай енчен танлаштарма пӑхатчӗ. Халь ватти те, ҫамрӑкки те машина ҫине ларса курманни ҫук. Ӗлӗк ват ҫынна та ҫуран нумаях ҫӳреме тивнӗ.

Алякки йысна хӑйӗн туйипе ҫӗре таккаса калатчӗ:

– Ку туя маншӑн юпах тиха вырӑнне, ман туяра юпах тиха вӑйӗ, – тесе хуратчӗ.

Каласа пама тесен манӑн асанне тӗлӗнсе каймалла ӑстаччӗ. Ҫавӑнпа та пулӗ ун юмахӗсенчен нумайӑшне паян илтнӗ пекех асра лайӑх тытатӑп.

Шухӑш-кӑмӑлпа пӗр килтерсе калама, савӑнтарма пултаратчӗ вӑл: йӗмелле чух куҫҫульпех йӗретчӗ, кулмалла чух хамӑрпа пӗрлех ахӑлтатса кулатчӗ, юрламалла-савӑламалла чух юрлатчӗ те, савӑнатчӗ те...

Асаннен пире калавсемпе юмахсем юптарнӑ чухне кӑна мар, ахаль калаҫнӑ чухнехи сӑмахӗсем те питех те витӗмлӗччӗ, вӑл ваттисен сӑмахӗсемпе анлӑн усӑ куратчӗ.

Паянхи пекех аставатăп: «Юлташăнтан уйрăлан – пĕр çул йĕрĕн, кил-йышăнтан уйрăлан – вун çул йĕрĕн, ял-йышăнтан уйрăлан – ĕмĕр йĕрĕн», – тенине. Пуриншĕн те паллă: ял-йыш кунта – халăх, тăван çĕршыв. Тĕнчере, пурнăçра çыншăн Тăван çĕршывран хакли урах нимĕн те çук.

Асанне пире, ачасене, шкулта тăрăшса вĕренме хушатчĕ:

– Çамрăкла вĕренни – чул çинче, ватăлла вĕренни – юр çинче, – тесе час-часах калама юрататчĕ вăл. Çакăн çинчен унăн пĕр пĕчĕк калавĕ те пурччĕ, ăна çак кĕнекене кĕртнĕ.

Е тата хăш-пĕр чух: «Сунас вăйлă çынтан çуррине хăварап, вăйсăррине пĕтĕмпех илеп тесе калать тет», – тесе хуратчĕ.

Сывлăха тĕреклетмелле, чăтăмлă та вăйлă пулмалла, вара чир-чĕр те çыпăсмасть, – ăс паратчĕ ун чух асанне.

Вăл пире сывлăхлă, вăйлă, лайăх кăмăллă, турĕ çынсем пулса ӳсчĕр тесе тăрăшнă çав.

Асаннен калавĕсенчен чылайăшĕ нихçан та кивелмест пуль тетĕп.

Хăш-пĕри кивелнĕ пек пулсан та вĕсен тĕп шухăшĕ пирĕншĕн халиччченех хăйĕн пĕлтерĕшне çухатман.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.